АЛЕКСЕЙ АНАТОЛЬЕВИЧ АЛЕКСАНДРОВ (САНТĂР ЭЛТИЯРĔ)

Чăваш Республикинчи Тăвай районĕн Ураскасси ялĕнче 1996 çулти çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕнче çуралнă. Шупашкар хулинче пурăнать. Мĕн ачаран чăваш халăхĕн эткерĕпе кăсăкланнă. Тăвайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта вĕреннĕ чухне вара ытларах биологи, экологи, географи, хими тата истори енĕсемпе пĕлĕве туптанă. Район, республика шайĕнче пĕрре мар пултарулăхне кăтартнă. Раççей шайĕнчи тупăшусенче те биологипе тата экологипе çĕршыври чи пултаруллă ачасенчен пĕри пулнă, Чăваш Ен чысне тивĕçлĕ хӳтĕленĕ. 2012 çулта "Çурăм шăммиллĕ чĕрчунсен зоологийĕ" дисциплинăпа Раççейĕпе чи лайăх пĕлекен шкул ачи пулса тăнă. Биологи енĕпе Раççейĕн пĕрлештернĕ ушкăнне кĕнĕ, тĕнче шайĕнчи олимпиадăна Мытищи хулинче хатĕрленнĕ. Шкул хыççăн çăмăллăнах Хусанти медицина университетне вĕренме кĕнĕ. Икĕ çул Тутарстан Президенчĕн "Тутарстанри пултаруллă çамрăксем" ятарлă стипендине тивĕçнĕ. Çав вăхăтрах Тутар Республикинчи чăвашсемпе тачă хутшăну йĕркеленĕ, унти хастарсемпе чăваш çамрăкĕсем валли ташă каçĕсем, Çĕнĕ çул уявĕсем йĕркелес ĕçе хутшăннă. Медицина университетĕнчен кайсан Тутарстанри чăвашсен "Сувар" обществăпа политика хаçатĕнче вăй хума тытăннă, Чăваш патшалăх университетне вырăс тата чăваш филологийĕпе журналистика факультетĕнчи чăваш филологи уйрăмне куçăн мар майпа вĕренме кĕнĕ. Паянхи кун 4-мĕш курс студенчĕ, лайăх паллăсемпе кăна вĕренсе пырать.

2016 çулта Хусантан Шупашкара куçса килнĕ, Чăваш Ен наци радионе ĕçе вырнаçнă. Пирвайхи тапхăрта хыпарсен пайĕнче вăй хунă, кайран илемлĕ кăларăмсен пайне куçнă. Паянхи кун Алексее "Сантăр Элтиярĕ" ятпа пĕлеççĕ. Вăл "Эткер", "Ылтăнран хаклă", "Пĕр кăкран" тата "Кала-ха" кăларăмсен ярăмĕсене йĕркелесе пырать. "Эткер" кăларăмра чăвашсен сăмахлăхне, йăли-йĕркине тĕплĕн тишкереççĕ. Вăл эрнере пĕр хут тухать. Алексей республикăри паллă фольклорçăсемпе, этнографсемпе ĕçлет. "Ылтăнран хаклă" ярăм кунсеренех эфирта. Вăл чăвашсен Христос тĕнĕчченхи ячĕсем çинчен. Ятăн историне, тымарĕсене палăртаççĕ. "Пĕр кăкран" кăларăм республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсен пурнăçĕнчи курăмлă самантсемпе паллаштарать. "Кала-ха" кăларăм ачасем валли йĕркеленнĕ, кашни кун тухать, тĕнчери чи кăсăк ыйтусене сӳтсе явать, чăвашсен кун-çулне, йăли-йĕркине ăнланма пулăшать.

2018 çулта Алексей Шупашкарти Федор Павлов ячĕллĕ музыка училищине вĕренме кĕнĕ, халăх юррисене харпăррăн тата ушкăнпа юрлама хăнăхтаракан уйрăмра пĕлӳ пухать. Халĕ вăл пĕрремĕш курс студенчĕ. Тăрăшса ĕçленĕшĕн ăна Чăваш Ен наци телерадиокомпанийĕ тав хучĕпе чысланă. Музыка училищин, Халăх пултарулăхĕн çурчĕн ĕç-пуçне хастар хутшăннăшăн та пĕрре мар тав хучĕ илме тивĕçнĕ вăл. Музыка училищинчи "Янтал" ансамбльпе Алексей республика, Раççей, тĕнче шайĕнчи тупăшусенче малти вырăнсем йышăннă.